# ОКТЯБРЬ ТАНТӐШӖ

1967 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче, Канаш районӗнчи пӗр колхозра чӑваш литературин эрни пынӑ кунсенче, ҫакӑн пек тӗлӗнмелле ӗҫ пулса иртрӗ. Чӑваш писателӗсемпе пӗрле кунта Ленинградри оперӑпа балет театрӗн артисчӗ Николай Шпекторов пынӑччӗ. Вӑл совет композиторӗсен, вырӑс, чӑваш халӑхӗсен юррисене юрларӗ. Ҫак артист клуб сцени ҫине тухрӗ те Герман Лебедев композитор Василий Давыдов-Анатри сӑввипе ҫырнӑ «Тальянка» юрра пуҫларӗ:

Алла тытрӑм ҫӗн тальянка,
Тӑсса ятӑм пӗрмине.
Янӑратӑр кӗмӗл планка,
Савӑнтартӑр хӗрсене...

Клуба пухӑннӑ ҫамрӑксем чӑтаймарӗҫ, вӗсем те артистпа пӗрле ҫак юрра шӑрантарма тытӑнчӗҫ. Сцена ҫине юрӑ авторӗ Василий Давыдов-Анатри поэт тухрӗ. Вӑл хӑйӗн ҫӗнӗ сӑввисене вуларӗ. Ҫамрӑксем унтан та юрӑ ыйтрӗҫ. Поэт чӑтаймарӗ, юрласа ячӗ...

Чӑнах та, В. Давыдов-Анатри поэта пирӗн тӑван халӑхӑмӑр лайӑх пӗлет. Унӑн сӑвви-юррисене вулакансем чун-чӗререн кӑмӑлласҫӗ. Мӗншӗн тесен В. Давыдов-Анатри — хальхи пурнӑҫпа тан пыракан поэт. Вӑл Тӑван ҫӗршыв-аннемӗре, Коммунистсен партине, Совет ҫыннисен ӗҫне-хӗлне, халӑхсен туслӑхне, ҫамрӑксен паттӑрлӑхӗпе хӑюлӑхне мухтаса ҫырать. Поэт пултарулӑхӗнче аслӑ ҫулпуҫӑмӑр Ленина халалласа ҫырнӑ сӑвӑ-юрӑсем паллӑ вырӑн йышӑнаҫҫӗ.

Эпир тав тӑватпӑр сана, аслӑ Ленин,—
Аркатрӑн эс, ватрӑн асап тӗнчине.
Ӗҫхалӑхӗн кӗтнӗ пӗртен-пӗр ҫын-гений,
Пире парнелерӗн телей уҫҫине,—

тет вӑл хӑйӗн Ленин ҫинчен ҫырнӑ пӗр сӑввинче.

Василий Иванович Давыдов-Анатри—Октябрь тантăшĕ. Вăл 1917 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче, Патăръел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче, хальхи Первомайскинче, вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ, ĕлĕкхи саманари ытти çынсем пекех, хутла пĕлмен çынсем пулнă. Анчах та вĕсем хăйсен ачисене вĕрентес, пурнăç çулĕ çине кăларас çутă ĕмĕтпе пурăннă. Совет самани вара вĕсен çак ырă ĕмĕтне пурнăçлама пысăк майсем пачĕ. В. Давыдов-Анатри ялти шкултан, хаçат шкулĕнчен, учительсем хатĕрлекен Чăваш государство институтĕнчен вĕренсе тухнă. 1940 çулта Совет Çарне кайиă, унтан таврăнсан Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат редакторĕ, парти Чăваш обкомĕн инструкторĕ пулнă. Чăваш радиокомитетĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче, Чăваш АССР государство издательствинче ĕçленĕ... Хальхи вăхăтра вăл литература ĕçĕпе пурăнать...

В. Давыдов-Анатри ялти шкулта вĕреннĕ çулсенчех сăвăсем çырма пуçлать. Вăл кун çинчен хăйĕн пĕр произведенийĕнче çапла каласа парать: «Пирĕн ялта, Аслă Арапуçĕнче, чăвашсен паллă поэчĕ, чĕлхе ăсти Митта Васлейĕ çуралса ӳснĕ. Митта Васлейĕн шăллĕсем — пурте ман туссем пулнă...

Поэтăн Якку ятлă шăллĕ манпа пĕрле вĕренетчĕ. Вăл, пиччĕшĕ пекех, сăвăсем хайлатчĕ. Вăл çырнă йĕркесем шăрça пек пулса пыратчĕç. Шкулта пире асăрхарĕç пулас, стена хаçачĕ кăларма суйларĕç. Якку—сăвăç, эпĕ—художник... Хаçат уйăхра пĕрре тухатчĕ. Илемлĕ, лайăх кăлараттăмăр ăна. Пĕррехинче эпĕ те çуркунне çинчен çĕрĕпе сăвă çырса лартăм.

Çӳлте, тӳпере,
Сар хĕвел хĕртет.
Умра — çуркунне,—
Шур юр ирĕлет.
Ачасем пурте
Тулта, урамра,
Еçлеççĕ хĕрсе,
Лартаççĕ йăмра.
Шăнкăрч савăнса
Юрă шăрататъ,
Çунатне çапса
Пире саламлать...

Ку вăл ман малтанхи чун хĕлхемĕ пулчĕ пулас. Çав хĕлхеме сӳнме памарăм вара.

Эпĕ тăван чĕлхене, тăван литературăна ачаранах питĕ юрататтăм. Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкайпа Митта Ваçлейĕ, Уйăп Мишшипе Илле Тукташ, Яков Ухсайпа Нестер Янкас тата ытти поэтсем çырнисене каçса кайса вулаттăм, вĕсем майлă çырма тăрăшаттăм...»

Поэтăн пысăкрах произведенийĕсенчен «Чеменпе Мерчен», «Шуршăл каччи» поэмăсене, сăвăласа çырнă «Илле-паттăр» юмаха, «Вутăш-хĕр» легендăна палăртмалла.

«Чеменпе Мерчен» поэмăра автор чăваш халăхĕн Октябрь революцичченхи йывăр пурнăçне кăтартса парать. Унта тарçăра тертленсе пурăннă чухăн хресчен ачи Чемен мĕнле ӳссе пыни, революци çынни пулса тăни вулакансен куçĕ умне уçăмлăн тухса тăрать. Автор çак поэмăна сырнă чух халăх сăмахлăхĕпе пĕлсе, анлăн усă курнă. Унти юрăсене вăл параллелизм меслечĕпе çырнă. Поэмăн чĕлхи илемлĕ, çăмăл вуланать.

Акă:

Мерчен Чемен çинелле
Пăхрĕ ăшшăн, йăл кулса.
Сар уйăх та, савăнса,
Илчĕ йăлтăр çуталса.
— Куртăм сана вăййăра
Хĕрĕх ача хушшинче.
Юлтăн эсĕ асăмра,
Юлтăн чĕрем варринче...

Поэмăра тăршшĕпех пĕр кĕвĕ, халăх вăй-халне мухтани илтĕнсе тăрать:

Пурте пĕрле кар тăрсан —
Вăйли çук-мĕн халăхран.

Чăнах та, халăх çĕнтерет. Чеменпе Мерчен те хăйсем çуралнă яла çĕнтерӳпе таврăнаççĕ. Поэма халăха, çĕршыва мухтакан йĕркесемпе вĕçленет:

Çур шыв вăйлă тееççĕ,
Унтан вăйли мĕскер пур?
Паттăр халăх вăйĕ пур,
Хамăр Тăван çĕршыв пур...

Вырăссен паллă поэчĕ Сергей Наровчатов ку произведение тивĕçлĕ хак парса çапла çырать: «Поэма по-настоящему народна. Построенная на фольклорном материале, она в глазах широкого читателя хорошо представит чувашскую поэзию».

«Чемеппе Мерчен» поэма 1946 çулта лайăх произведенисем çырас тĕлĕшпе ирттернĕ республикăри конкурсра 3-мĕш преми илме тивĕçлĕ пулнă.

«Шуршăл каччи» ятлă лирикăлла поэмăра В. Давыдов-Анатри хамăр янташăмăр Андриян Григорьевич Николаев космонавтăн пурнăçне, унăн паттăр ĕçне çырса кăтартнă.

В. Давыдов-Анатри юрăсем валли сăвăсем çырас тĕлĕшпе уйрăмах ăнăçлă ĕçлет. Вăл чăваш композиторĕсемпе пĕрле çырнă «Тăван партие — мухтав», «Чечекленет чăваш çĕршывĕ», «Тăвансемĕр, тав сире», «Телейлĕ туслăх», «Эпир, маттур хăмлаçăсем», «Кĕмĕл уйăх хăпарать», «Сарпике» тата ытти нумай юрăсене хуласемпе ялсенче, шкулсемпе уявсенче — пур çĕрте те илтме пулать. Çакă вăл поэта, пире те савăнтарать. Ахальтен мар пулĕ поэт хăйĕн пĕр сăввинче çапла çырать:

Шутларăм эпĕ пĕр-пĕччен:
Мĕскер юлать эпир вилсен.
Юлаççĕ пирĕн сăвăсем,
Савса юрланă юрăсем,
Çĕршыв-аннешĕн çырнисем,
Чунта çунат çуратнисем.

В. Давыдов-Анатри пултарулăхĕнче хамăр Тăван çĕршыври халăхсен туслăхĕ çинчен çырнă сăвă-юрăсем те паллă вырăн йышăнаççĕ. Поэт çĕршывăн хăватне халăхсем хушшинчи çирĕп туслăхра курать, уншăн хăй те чунĕререн савăнать.

Вырăспала вырăсла,
Тутарпала тутарла.
Пултаратăп калаçма,
Яр уçатăп чунăма.
Чĕлхем пăртак такăнсан,
Кăштах картне лармасан,
Мана хатĕр пулăшма,
Мана хатĕр ал пама
Вырăс тусăм вырăсла,
Тутар тусăм тутарла,—

тет вăл хăйĕн пĕр сăввинче. Лайăх, тĕрĕс каланă поэт.

Çĕршыври халăхсен туслăхĕ çинчен поэт çул çӳренĕ чух çырса пынисене те ырăпа асăнмасăр иртсе кайма çук. Унăн Казахстанпа Азербайджан, Дагестанпа Армени республикисем, Ярославль çĕрĕпе вĕсен ĕçчен те сăпайлă çыннисем çинчен çырнисене вулакансем кăмăллаççĕ.

Çĕр çинчи пурнăça сыхласа хăварас тесен,—мир кирлине поэт лайăх ăнланать. Вăл планета çинчи пĕтĕм ырă шухăш-кăмăллă çынсене миршĕн тăма, кĕрешме чĕнет.

... Юнлă вăрçă каймасть
        асăмран ĕмĕрне.
Вăл хăварчĕ суран
        кашни çын чĕрине.
Эп таятăп пуçа
        вилнисен умĕнче:
Пултăр Мир ĕмĕрех
        Çĕр-планета çинче!—

тет поэт хăйĕн пĕр сăввинче.

В. Давыдов-Анатри мирпе туслăха çирĕплетес тĕлĕшпе пархатарлă ĕçсем тунăшăн 1957 çулта Чăваш республикинчи Çамрăксен Пĕрремĕш фестиваль лауреачĕн ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Мире сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕ ăна 1973 çулта Хисеп грамотипе наградăланă.

В. Давыдов-Анатри сатирăллă сăвă-юрăсем те сахал мар çырчĕ. Вĕсенчен уйрăмах «Питлет ялйышăм Çтаппана», «Çитет», «Сăмах пур ман», «Пырать пĕр каччă», «Антар, Антун», «Вĕçкĕн Иван мухтанать», «Пĕтрĕç йăпăлтайкинсем» тата ытти сăвăсене те палăртма пулать. Вĕсенче поэт пурнăçри усал-тĕселсене, ĕçрен таракансене, ĕçкĕпе иртĕхекенсене, патшалăха çаратакансене питлет.

Нумай шавлатăн, калаçан,
Пулман ĕçӳшĕн мухтанан.
Кичем пире сан пек çынпа,
Пуш параппан çапаканпа.
Хальхи хитре саманара,
Çын хисепре — ĕçне кура,—

тесе çырать вăл «Пуш параппан» сăввинче.

В. Давыдов-Анатри — шкул ачисен çывăх тусĕ. Вăл

çырнă «Илемпи», «Юмахсем» тата ытти кĕнекесене те ачасем юратса вулаççĕ.

Поэт юлашки çулсенче проза жанрĕпе те ĕçлерĕ. Вăл ачасем валли çырнă пĕчĕк калавсене пĕр çĕре пухса «Эпир — пĕртăвансем» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Кĕнекери калавсен тематики пуян. Вĕсенче эпир совет ачисен вĕренĕвне, ĕçне-хĕлне, вĕсем çĕршыв-аннемĕре чун-чĕререн юратнине лайăх куратпăр.

Поэт хăйĕн ача чухнехи пурнăçĕ çинчен «Сатин кĕпе» повесть çырчĕ. Автор унта, хăй пурнăçĕнчи тĕслĕхсемпе усă курса, совет саманинче чăваш ачи мĕнле ӳссе, вăйхал илсе пынине, аслă çул çине тухнине çырса кăтартнă.

В. Давыдов-Анатри — хальхи çĕнĕ самана, хĕрӳ пурнăç юрăçи. Вăл хăйĕн пĕтĕм ĕçне-хĕлне Тăван çĕршывпа, тăван республикăпа çыхăнтарнă. Ăна яланах рабочисем, ял ĕçченĕсем, шкул ачисем хушшинче курма пулать. Вăл хăйĕн пурнăçа юратма вĕрентекен сăвви-юррисемпе вулакансене хавхалантарать, çĕнĕ çĕнтерӳсем патне паттăррăн утма чĕнет.

Чăваш совет илемлĕ литературине аталантарас тата пропагандăлас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн 1967 çулта В. Давыдов-Анатрие Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ работникĕ ятне пачĕç. Поэт В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул тултарнă ятпа кăларнă медале те илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Çапла ĕнтĕ, поэт Çĕршывпа пĕрле, халăхпа пĕрле хăюллăн малалла утать. Вăл хăйĕн пархатарлă пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çапла çырать:

> Иртрĕç иккен кунсем, çулсем,
> Кĕмĕлленеç çӳç пĕрчисем.
> Анчах патвар тапать чĕрем,
> Чунта çаплах — çурхи илем!

*1967—1974.*

## ХУДОЖНИК, ПИСАТЕЛЬ, ЖУРНАЛИСТ

Пĕррехинче эпĕ Киевран «Украина» ятлă илемлĕ журнал илтĕм. Тĕрлĕ сăрпа тухса тăракан обществăпа политика тата литература журналĕ вăл. Ăна хальхинче пĕтĕмпех иккен хăйсен çĕршывне Америка агрессорĕсенчен хӳтĕлесе кĕрешекен Демократиллĕ Вьетнам Республики-